## ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

Тӗтреллӗ Висла леш енче ҫӳреп-и,
Кӗретӗп-и Карпат ту-чакӑлне,
Ӑҫта кайсассӑн та илтетӗп эпӗ
Тӑван чӗлхемӗн тунсӑх сассине.

Туссем калаҫнӑ чух, тӑван чӗлхемӗм,
Шур акӑш тӗкӗ евӗр эс ҫемҫе.
Санпа ман халӑх чунӗ те илемӗ
Ҫӳрет ҫӳлте те ҫӗр ҫинче вӗҫсе.

Юрланӑ чух сассу хитре те уҫӑ:
Итлет вӑрман та, хир те янраса.
Чулсем ҫинчи канми-тӑми ҫӑлкуҫӗ
Юхса йӑпаннӑ пек сассу таса.

Екки ярса ачашшӑн калаҫмалӑх
Ҫулла ҫап-ҫутӑ уйӑх шевлинчен
Туса сана шӑратнӑ манӑн халӑх,
Сана шӑварнӑ шӑпчӑк юрринче.

Анчах та халӑхӑн ҫилли хаяррӑн
Чӗре тулли йӳҫсе тапса тухсан,
Чӑваш чӗлхи, чӗлхемӗм, шӗл-кӑварран
Ҫунать вӑю та сан, юрру та сан.

Сана хӑрушӑ кунсенче касмалӑх,
Йыхравлӑн кӗрлеме кӗрешӳре
Хӗвелӗн ҫутипе туптанӑ халӑх,
Сана савса шӑратнӑ ҫиҫӗмре.

Сана йӑваш теме кам хӑюлланӗ,
Сана кам хурлӗ халӗ ҫӗр ҫинче, —
Итлерӗм эпӗ, гварди капитанӗ,
Сана вутри Воронеж хирӗнче.

Ҫулла — тусан, хӗлле — юр юнлӑ, тарӑн,
Ялсем те хуласем ҫинче хӗлхем.
Танкра та нӳрлӗ окопра тӑнларӑм
Тӗреклӗ сассуна, тӑван чӗлхем!

Орел та Прага, Киев та Варшава,
Белград та, Будапешт та, Порт-Артур.
Татти-сыпписĕр пычĕ вăрçă шавĕ.
Унта чăваш чĕлхин те пайĕ пур.

Тăван чĕлхемĕмçĕм, тăванлă эсĕ
Пуян та çирĕп вырăс чĕлхипе.
Инкек те терт, асап та хур пĕлмесĕр
Янра та савăн аслă пиччӳпе!

Тăшман тесен — çиллен, кĕрле кĕр те кĕр.
Туссем тесен — саркайăкла ян-ян.
Хитре сассу та шухăшу ĕрчетĕр,
Кĕрхи уйри йĕтем пек пул пуян!

Сана паян тиркевлĕ хурлаканĕ
Ăçта кам пулĕ пысăк çĕр çинче, —
Мухтатăп эпĕ, гварди капитанĕ,
Сана хĕвел те уйăх умĕнче.

*1945*